К 84.09(=998)
Т 24
2.2.095-848

И. ТӐХТИ

ШЕРХУЛЛА

Эпĕ мĕн ачаранпах кĕтӳре çӳреп.

Анатри чăвашсем патĕнче — Çавалта, Чупайра, Шăхранта, Хапăсра пĕрер çул кĕтӳ кĕтнĕ эпĕ.

Халĕ Вирьялта кĕтӳ кĕтетĕп. Çăкшăмра, Нурăсра, Тенире пĕрер çул кĕтӳре çӳрерĕм.

Шерхулла тесен, мана пур çĕрте те пĕлеççĕ.

Вырăс тесен — вырăс мар, тутар тесен — тутар мар эпĕ.

Ман атти Çармăшкасси тутарĕ — Ахмет ятлă пулнă, анне вĕренерсем, Анук ятлăскер, чăваш хĕрĕ пулнă.

Атте Вĕренерте кĕтӳ çӳренĕ чухне аннене качча илнĕ.

Эпĕ ĕнтĕ çавăнпа чăвашпа тутар хутăшла çын.

Выльăхсене лайăх сапаласа çитеретĕп те, эпĕ кĕтӳре çӳренĕ чухне ĕнесем сĕт лайăх параççĕ, выльăхсем самăр пулаççĕ.

— Шерхулла пичче кĕтӳре çӳренĕ çул ĕнесем, сурăхсем хĕсĕр юлмаççĕ, сыснасем кĕтӳрен тармаççĕ,— тесе калаçаççĕ маткасем.

Чăнах та, эпĕ ытти кĕтӳççем пек мар, выльăха нихçан та çапса амантман; мана çавăнпа пур çĕрте те юратаççĕ.

Кĕтĕве кĕрĕшнĕ чухнех халăх çинче малтанах каласа хурап:

— Кĕтĕве ир хăвалăр; кĕтӳ янă чухне урамра ача-пăча выльăха хăратнă ан пултăр, выльăх ирĕккĕн киле таврăнтăр; выльăха кам та пулин çапса, сурăх-сысна урисене персе хуçсан, айăп манра мар,— тесе калатăп.

Тенире, çавăн пек, пĕр куштан çын ачи Ративан сыснине хăвала-хăвала алтуйипе персе пынă. Ративан сысни, пĕтĕскер, тарайман. Вунтăват-вунпилĕк çулхи ача пĕтĕ сыснана хăваласа çитеймест-и вара вăл?

Ративан сысни çăвăр пăрахрĕ вара.

Çав ача ятне халĕ маннă. Ун чухне ачине те, ашшĕне те халăх çинче хытă ятларăм.

Выльăха курайман çынна эпĕ хытă çĕмĕретĕп.

Ман атти те выльăха хисепленĕ. Ăна та, ман пекех, пурте юратнă.

Кĕтӳре лайăх çӳресси çăмăлах мар та, эпĕ çавах çӳреттĕм. Кирек хăш ялта та, ĕçкĕ-çикĕ таврашне, чӳк пăтти-мĕн çимелле пулсан, çын ярса чĕнтермесĕр хăвармаççĕ мана.

Пĕр çулне, çавăн пек, Шураçра кĕтӳре çӳрерĕм. Шураç вăл Нурăсран çирĕм çухрăмра, Сăр шывĕ еннелле. Шураçăн пулнă çул тырă лайăх пулать. Шураçра çичĕ çил арманĕ. Чăпта çапакан та нумай унта. Арçынсем те, хĕрарăмсем те чăпта çапаççĕ.

Чăпта çапасси кĕтӳре çӳрессинчен те хĕнрех вăл. Чăпта çапакансем Шураçра малтан шуралса, унтан кăвакарса хуралса каяççĕ. Чăпта çапасси çынна сăнран ӳкерет-мĕн вăл.

Шураç ялĕ — пысăк ял...

Пысăк кĕтĕве йышсăр кĕтме хĕн çав. Çавăнпа хампа пĕрле кĕтӳре çӳреме икĕ тутар ачи, икĕ чăваш ачи тытнăччĕ эпĕ вăл çулне.

Çав çулне Шураçри Мăн Тимухха ывăлне авлантарма Штанашран хĕр çураçнăччĕ.

Çимĕк умĕн пĕр-икĕ кун малтан, сап-сар уяр кун, кĕтĕве уйра питĕ лайăх салатса çитертĕмĕр те выльăхсене Выл шывĕ хĕрне тапăра антарса вырттартăмăр.

Сыснасем шыв хĕрринче пылчăка чаваланса выртаççĕ. Ĕнесем ăшăпа шыва кĕрсе тăраççĕ. Качакасем чăнкă çĕре, çырана, выртаççĕ. Сурăхĕ вăл, ăшăпа хашкаса, пăртак хăра-хăрах шыв ĕçет те мăя тăсса выртать.

Шураç ачисем кĕтӳрен лашасем пыра-пыра тытаççĕ.

— Паян Тимухха пиччен Ваçли туйне каятпăр; Шерхулла пичче, эс те айта туя,— теççĕ мана ачасем.

Мăн Тимуххан кĕçĕн ывăлĕ тапăра чупса пычĕ те:

— Шерхулла пичче! Атте сана Штанаша туя кайма чĕнет, атя часрах,— терĕ.

Эпĕ хайхи кĕтĕве пăхма ачасене хăварап та Шураçалла утатăп.

Ку тăрăхра — Шураç, Шăмат, Хучаш, Эскетен таврашĕнче туя питĕ кепмер * тăваççĕ. Пĕр ялта туй пулсан, вăл яла çирĕм ял та пырать пуль туя.

Эпĕ уй хапхи патне çитнĕ çĕре Шураçран çар пек кĕрлесе тухать туй.

Туй пуçĕ мĕлĕшсем пулнă, флотски салтак, Прамун ятлăскер, питĕ вăйлă çын. Вăл хăйĕн маткипе пырать, тата тепĕр мăшăр ларнă унпа, икĕ лашапа, лашисене ташлатса пыраççĕ вĕсем малтан.

Мăн кĕрӳ, кĕçĕн кĕрӳ, Тимуххан аслă ывăлĕ Ваçук — кĕрӳ пуласси, икĕ туй арăмĕ, парнесем çакса пĕтернĕ виçĕ лашапа, пысăк кӳмепе ларса пыраççĕ. Вĕсен хыççăн çатан урапасемпе, кӳмесемпе, пĕрер-икшер лаша кӳлнисем, сарă шурă тутăрсем

* Кепмер — чаплă, пит вăйлă. *(Автор асăрх.)*

çакса пĕтернĕ — аллă урапа ытла пулĕ — Шураçран йăтăнса тухаççĕ. Шураç урамĕнче шап-шурă халăх. Витре-витре сăрапа, эрехпе ăсатаççĕ туя.

Шăпăр, сăрнай, купăс, параппан — пурте пур.

Мĕлĕшри Алтан Васли кӳме тăрне ларнă, шăпăрне ахăртса пырать.

Мана пурте:

— Шерхулла пичче, лар та лар, пирĕнпе лар,— теççĕ.

Эпĕ Юс Митюксен çатан урапи çине лартăм.

Параппан çапса, кармунипе юрлаççĕ туй ачисем:

Атьăр туя, ачасем!
Ура канне кӳрĕпĕр;
Алă канне кӳрĕпĕр,
Ĕçĕпĕр те çийĕпĕр,
Юрлăпăр та ташлăпăр,
Выльăпăр та кулăпăр,
Ай-ях-аяр-ар-ай-ях.

Пирĕн пичи Васук пур,
Ялти хĕре илесшĕн
Ялан ата тăхăнчĕ.
Ялтан илни пулмарĕ,
Ата çĕтни пустуй пулчĕ.

Йысна пулас Васук пур,
Инки пулас Веруç пур,
Суя аки Настаç пур,
И Настаç аки пур;
Суя ятне илтес çукчĕ,
«Пырăп» тени хупларĕ.
Ай-ях-аяр-аяр-ай-ях.

Эпĕ те, юрă тесен, питĕ хавас. Пĕрре çапла пулчĕ.

Пирĕн, тутарсен, сапантуйĕ пулать те, унта кĕрешеççĕ, лашасем чуптараççĕ, çынсем те ăмăртмалла чупаççĕ. Кам çĕнтерекене укçа, тĕрлĕрен парне параççĕ. Тутарсен сапантуй прашникĕ çулла, канлĕ вăхăтра, уйра е аслă çаран çинче пулать.

Çакăн пек кĕтӳре çӳренĕ çĕртенех, эпĕ пĕчĕк чухне, пĕрре аттепе иксĕмĕр çав сапантуйне кайрăмăр.

Кӳпĕшкасси патне аслă улăх тулли тутар пухăннă. Пуян тутарсем ик-виç майрапа, икшер лашапа пынă. Майрисем, халат пĕркенсе, пичĕсене витсе лараççĕ; куç курмалăх анчах халата кăшт уçса пăхса лараççĕ.

Курма пынисем вăл тăрăхри чăвашсем те пурччĕ. Пухăннă халăх, аслă кăшăл пек, сапантуй вырăнĕ йĕри-тавра çавракан тăрса тухнă.

Малтисем лараççĕ, выртаççĕ; хыçалтисем ура çинче тăраççĕ.

Аттепе эпир каярах çитнĕччĕ, лашасене тавлашса чуптарнă çĕре ĕлкĕреймен эпир.

Пурĕ çирĕм лаша ытла тавлашса чуптарнă, тет. Çĕнтерессине Йăвăнчă тутар лаши çĕнтернĕ, тет.

Эпир пынă çĕре вăл лашана, пурçăн тутăрсем çакса, уттарса, сывлатса çӳретчĕç. Лаши яштакскер, тимĕр кăвак, хура хушкаллă лаша.

Унтан вара тутарсем сапантуй варне ылмаш-ылмаш тухса юрлама пуçларĕç.

Манăн та юрлас килчĕ. Эпĕ аттерен:

— Эпĕ те тухса юрлам-и? — тесе ыйтрăм.

Атте:

— Ҫайса юрласа пӑх,— терӗ.

Эпӗ вара хайхи сапантуй варне тухса тӑтӑм. Ыттисем юрла-юрла чаранcан, пӗр пысӑк вата тутар, сапантуй пуҫлӑхӗ, мана:

— Йӑрлиссӑн-мӗ? Йӑрлиссӑн булса — йӑрли *,— терӗ.

Эпӗ вара:

Алттӑн балда — кӗмда бар,
Ҫӗмӗш балда — кӗмда бар **,—

тесе юрла пуҫларӑм.

Тутарсем, майрисем, тутар ачисем — пурте ман ҫине пӑхаҫҫӗ.

Эпӗ юрласа пӗтерсенех, мана пурте алӑ ҫупса ырларӗҫ.

Эчеяль тутарӗ, пуян Сейдулла, мана хӑй патне чӗнсе илчӗ те кӗсъе тулли канхвет пачӗ, бархат тӳпеттей тӑхӑнтарчӗ, тӳпеттей ҫинчен пурҫӑн ҫыхнӑ шурӑ шӗлепке тӑхӑнтарчӗ.

Анне кӗтӗве юлнӑччӗ те, атти калать:

— Ҫанхветне, пӗр ик-виҫҫӗшне, аннӳ валли те хӑвар,—тет.

Ҫирӗм ҫул ытла ӗнтӗ эпӗ ҫав тӳпеттейпе шурӑ шӗлепкене пуҫран пӑрахман, ялан тӑхӑнса ҫӳретӗп. Эпӗ япалана тирпейлӗ тытап та, тумтире те эпӗ тасарах тумланатӑп. Маткасем вара: «Шерхулла пичче! Эсӗ илемлӗ ҫӳреме юратан-ҫке»,— теҫҫӗ час-часах.

Ачаранпах юрлама юратаканскер, юрӑ, шӑпӑр, хуткупӑс сассине илтсен, ман ахаль те ӑшчик хускалса каять вара, уралӑ ҫӑмӑлланать.

Ҫӗрстин-кӗрстин! тутарса, темиҫе параппан ҫапаҫҫӗ.

Туй лашисем те пуҫӗсене ывӑтса пыраҫҫӗ, хӑлхисене вылятаҫҫӗ. Юс Митюкӗпе ларсанах, эпӗ те вара юрлама пуҫларӑм.

Юс Митюк арӑмӗ, лутрарахскер, сарӑ, хитре арӑм. Митюкӗ ларчӑк ҫинче лашасем тытса пырать те, арӑмӗ мана калать:

— Шерхулла пичче! Штанаша пырса кӗнӗ чухне эпир иксӗмӗр хытӑрах юрлӑпӑр, санӑн сассу лайӑх, ман Митюк пӗртте юрлама пӗлмест. Эсӗ юрра, хуҫкаласа, илемлӗ ҫаварса яран, санпа юрлама пит ҫӑмӑл,— тет мана.

Параппан, купӑс сассипе юрласа пыратпӑр:

Штанаш ҫулӗ — вӑрӑм ҫул;
Ҫул вӑрӑмшӑн каймастпӑр,
Хӗр вӑрӑмшӑн каятпӑр.
Ой-ях-яй-яй, яр-ай-яй.

Штанаш ҫулӗ — кукӑр ҫул;
Те кукӑр та те тӳрӗ —
Эпир ӑна пӗлместпӗр.
Ҫул кукӑршӑн каймастпӑр—
Хӗр чипершӗн каятпӑр
Чипер арӑм туянма.

Эпир туя каймасан,
Туйӑн кӗрнек килес ҫук,
Хӗртен арӑм пулас ҫук.
Эпир, туя кайсассӑн,
Туй кӗрнекне кӳрӗпӗр,
Хӗртен арӑм тӑвӑпӑр.

Штанашпа Шураҫ хушшинче вӑрман. Ҫанталӑкӗ те уяр та,

* Юрлатӑн-и? Юрлатӑн пулсан — юрла (*тутарла*).
** Ылтӑн пуртӑ камра пур, кӗмӗл пуртӑ камра пур (*тутарла*).

вăрманĕ илемлĕ, пăхасах килет; ем-ешĕл ларать. Митюк матки те илемлĕ: çӳçĕ сарă, çӳç çинчен çĕнĕ масмак çыхнă. Чăтмалла мар, пăхасах килет Митюк маткине.

Çулпа вăрмана кĕрсе кайрăмăр çав янăратса. Вăрманта юрлама тата усă.

Хура вăрман, сĕм вăрман,
Атя туя пирĕнпе,—
Штанаш хĕрне туянса,
Пирĕн йысни Васюка
Мăшăр тупса парăпăр.
Ой-ях, аяр-аяр-ай-яя.

Çапла юрла-юрла, вăрман витĕр уя тухрăмăр.

Тӳрем уй. Ыраш пусси. Симĕс ыраш хушшипе, хура çулпа юхса пырать пирĕн туй. Штанаш курăнса ларать, пахча пек, йывăçлă ял, ем-ешĕл.

Эпир укăлча патне çитнĕ çĕре Штанашран пире хирĕç ачапăча сиксе тухрĕ. Пыратпăр юрласа, параппансем çапса; купăссем янăраççĕ; лашасем те пуçа çӳлерех ыватаççĕ; йĕс йĕвенсем йăлтăртатаççĕ; шăнкăрмасем шăнкăртатаççĕ. Укăлча хапхине уçса хунă. Юрлатпăр:

Çакă Штанаш ялĕнче
Сарă хĕрсем ӳснĕ, тет,
Сар хĕр илме килтĕмĕр;
Хамăр ялтан Шураçран,
Васук туйне килтĕмĕр —
Верук ятлă хĕр илме.
Васук пичи — шаланкă,
Шураç ялĕ çийĕнче
Пĕччен вĕçсе çӳренĕ.
Верук аки — кулюкка,
Ашшĕ пӳрчĕ тӳпинче
Пĕччен утса çӳренĕ.
Васук пичи — шаланкă,
Верук аки — кулюкка,
Штанаш çинчен Шураçа,
Иккĕш пĕрле, пĕрлешсе,
Мăшăр пулса вĕçчĕр-и?
Пирĕн мучи Тимуххан
Қил хушшине ярăнса,
Қăвăлтатса, выляса,
Иккĕш пырса ӳкчĕр-и?

Мĕлĕшри Алтан Васли кӳме çинче тайкаланса ахăртать çав шăпăрне.

Штанашра туя хирĕç тухнă халăх — урам тулли.

Алтан Васлисен кӳми уй хапхинчен кĕнĕ чухне Васли кӳме çине тăчĕ те, уй хапхи урлă хунă кашта çинчен ялт! сиксе каçса, çав кӳме çинех ларчĕ.

Пире пăхса тăраççĕ; эпир янратса пыратпăр урампа:

Çăл патйи ухнă чух
Çăл тараси каçăрлать.
Шураç каччи иртнĕ чух
Штанаш хĕрĕ каçăрлать.

Ыр çын алăк—тимĕр алăк,
Ал тĕкмесĕр кĕтĕмĕр;
Ыр çын хĕрĕ пуставлă,
Çапах илсе кайăпăр.

Ыр çын картиш тусанлă,
Тусан вĕçми кĕрĕпĕр;
Ыр çын хĕрĕ пушмаклă,
Çапах илсе кайăпăр.

Çĕрпӳ тиек — çĕр тиек,
Çĕр тиекпе мĕн тăвас?
Пирĕн кĕрӳ хăй тиек,
Тиек майри Веруç пур.

Пур саркайăк картара;
Пур хитре хĕр çак ялта.
Пĕрне пирĕн илесчĕ,
Çак ял кĕрӳш пуласчĕ.

Пулас, пулас, пуласах,
Çак ял кĕрӳш пуласах.
Пулас мар та пурнас мар,
Яшă ятне илтес мар.

Туй пуçĕ, Прамун, лашисене ерипе уттарма пуçларĕ. Пурте ун хыççăн майпе уттарса, юрласа пыратпăр. Пирĕнпе пĕрле урам тулли халăх пырать. Пурте шап-шурă тумтир тăхăннă. Хĕрсен, арăмсен кăкăр тулли кĕмĕл хĕвел çутипе йăлтăртататъ. Вĕт-шакă ача-пăча çăварĕсене карса пирĕн çине пăхать. Мĕлĕшри Алтан Васли, шăпăрне калама чарăнать те, кăме çине тăрать те, автан пек, аллисемпе хăлаçланса: «Киккирик! Киккирик! Киккирик!» — тесе пит хытă авăтса ярать. Унтан пĕтĕм халăх тĕлĕнсе кулать, Васли хыççăн ялти автансем те авăтаççĕ. Тата кăме тăрне чăхă пек лапчăнса ларать те, çăмарта туса аннă чăх пек, пуçне каçăртса кăтиклет. Çынсем тата хытă ахăлтатса кулаççĕ.

Хĕр ашшĕ патне çитетпĕр. Вăйлă çурт. Хапхине уçса хунă. Урамра йăмрасем, аслă картиш. Картиш варрине тенкелсем, сĕтелсем лартнă. Картишĕнче пичке-пичке сăра. Сĕтел çинче тулли çимĕçсем. Туй лашисене лупасайне, хăме тăрăх тăратаççĕ. Хăшĕ, картишне кĕрейменнисем, урама тăратаççĕ.

Хĕр ашшĕпе амăшĕ тата вĕсен хурăнташĕсем туй пуçне — мăн кĕрĕве, хăйсен кĕрĕшĕ пулассине — Васука, çăкăр-тăварпа, сăрапа: «Килĕрех, килĕрех»,— тесе, хирĕç тухса илеççĕ.

Туй пуçĕ, Прамун, хĕр ашшĕ панă куркана тытрĕ, ун арăмĕ хĕр амăшĕ панă куркана сулахай аллипе, саппун вĕçĕпе тытса, сылтăм аллине илчĕ.

Туй пуçĕ, Прамун, карттусне хывса салам кустарса тайăлчĕ хĕр ашшĕпе амăшне. Карттусне сулахай хул хушшине хупрĕ.

Хĕр ашшĕпе амăшĕ, Прамунпа арăмĕ, Васук, мăн кĕрÿ, кĕçĕн кĕрÿ, ик-виç туй арăмĕ тата хĕр ашшĕ енчен виç арçын, виçĕ арăм — пурте, куркасем тытса, сĕтел патне пырса тăчĕç.

Туй пуçĕ, Прамун, питĕ стайлă, кĕрнеклĕ çын, маларах тухрĕ те такмак пуçларĕ; туй халăх шăп пулчĕ, пурте итлеççĕ:

Хăтапала тăхлачă!
Сирĕн умра тайма пуçăм.
Пуçа тайса, ăш сăмах
Сире килсе калама
Кĕрÿ ашшĕ — шураççем
Мăн Тимухха хушсаччĕ.
Ырă хăта, тăхлачă!
Ыр сăмаха йышăнăр.
Тырă акса пурнакан,
Выльăх-чĕрлĕх усракан,
Ар-арăмлă, пурнăçлă,
Çăкăр-тăвар çиекен
Шураç ялĕ Тимухха,
Хăйĕн аслă ывăлне
Мăшăрланса пурăнма
Сирĕн хĕре çураçрĕ.
Килĕшÿллĕ çак туя
Çураçуллă тумашкăн
Эсир кăмăл тăвăрсам,
Хăтапала тăхлачă!
Пирĕн ăру-пĕлĕшре
Ăшă çилпе хăлхана
Ламран лама уй урлă
Сирĕн çинчен ăш хыпар,
Ырă сăмах илтни пур.
Пирĕн пĕлĕш ĕçкинче
Кĕрекере ларакан
Пулас хăтăр Тимухха,
Хăй арăмпе шутласа,
Хăйĕн савнă ывăлĕн
Васук куçĕ Веруçа
Ашшăн-ăшшăн пăхнине
Лайăххăнах сиснĕ те
Сирĕн хĕре кин кÿртме
Ырă шута шутланă.
Хăтапала тăхлачă!
Вăл шухăшран ĕç пулчĕ.
Çавăнпа та паян кун
Вăрман урлă, уй урлă
Сирĕн пата килтĕмĕр.
Хăтапала тăхлачă!
Пирĕн туя хапăлпа

Ырă кăмăл тăварччĕ.
Ку сăмаха хамран мар —
Кĕрӳ пулас Ваçукран,
Унăн тăнлă ашшĕнчен,
Туя килнĕ халăхран
Чунтан-вартан калатăп.
Сарă кайăк йăви пек —
Хăта килĕ — çурт-йĕрĕ;
Çакă ăшă йăвара
Хамăн савнă арăмпа
Виçĕ çавра юрлама,
Хăта, пире кăмăл ту.
Туй халăхĕ шавласа,
Ташла-ташла савăнсан,
Хăта, эсĕ ан çиллен.
Савăнакан савăнтăр,
Ташă ăсти ташлатăр.
Ырă сăмах-юмахпа
Ĉăнăçуллă * юрăпа
Пирĕн йышши этемĕн
Ĉăмăл-чунĕ кăнăçать,
Ăшĕ-чĕри лăпланать.



«Ĉайăк патши» калав алçырăвĕ. 1926 ç. ЧНТИ НА.

* Ĉăнăçуллă — килĕшӳллĕ, йĕркеллĕ. (*Автор асăрх.*)

Прамун ҫапла каласан, хӑтипе тӑхлачи Прамуна, арӑмне, мӑн кӗрӳне, кӗҫӗн кӗрӳне, туй арӑмӗсене сӑра ӗҫтерсе, сӗтел тавра лартрӗҫ.

Туя килнисене, курма пынисене вара сӑра ӗҫтерме пуҫларӗҫ. Сӑрана витри-витрипе ҫӗклесе ҫӳресе ӗҫтереҫҫӗ.

Яшӑсем юрлама, ташлама пуҫларӗҫ.

Алтан Ваҫли шӑпӑра ахӑртать; купӑс калаҫҫӗ; параппан ҫапаҫҫӗ, юрлаҫҫӗ.

Сакӑрвунӑ сакӑлтак,
Тӑхӑрвунӑ танкӑлтак;
Ваҫук пичи кӑмӑлне
Тытса чарми лашине
Ҫапса утми турӑмӑр.
И-и пичи Ваҫук пур,
Хӗрӗх тенкӗ патӑн та
Ҫак тарана эс килтӗн.

Эпир хамӑр пулсассӑн,
Ик ҫитмӗл те парас ҫук,
Аллӑ тенкӗ парас та,
Хамӑр ялтан тухас мар.
Шураҫри пек хитри ҫук,
Штанашра та пӗрех ҫех,
Вӑл та пулин ларма хӗр.

Туй арӑмӗсем тайкалана-тайкалана, тутӑр ҫавӑрса юрлаҫҫӗ:

Нарттин-нарттин кӑвакал,
Ратни вӗтӗ, мӗн тӑвас?
Ҫакӑ ялӑн хӗрӗсен
Йӑхӗ вӗтӗ, мӗн тӑвас?
Ҫӑлтӑр-ҫӑлтӑр кӑркка пур,
Ратни шултра, мӗн тӑвас?

Пирӗн Шураҫ хӗрӗсен
Йӑхӗ шултра, мӗн тӑвас?
Штанаш хӗрӗ мӗшӗлти,—
Мӗшӗлтетсе тухиччен
Сентел масмак тӑваҫҫӗ.
Ой-йӑр-аяр, ай-яй-яй.

Эпӗ юрӑ сӑмаххисене пурне те пӗлместӗп. Митюк арӑмӗ сӑвва питӗ пӗлет-мӗн. Сасси те унӑн ҫинҫе сас, йӗс шӑнкрав пек, уҫӑ янӑрать. Хамӑн та ман сас аван та, эпӗ сӑввине пӗлмен чух ҫеммине ярӑнтарса юрлатӑп.

Митюк арӑмӗ: «Тав сана, Шерхулла пичче!» — тесе, темиҫе курка сӑра тав туса ӗҫтерчӗ мана.

Хӗрнӗ майӗпе пулмалла, Митюк арӑмӗ ҫуталса кайнӑ, авкалана-авкалана юрлать. Митюк арӑмӗ хӗрсенчен те чипер. Мана хӑйӗн кӑвак куҫӗпе пӑха-пӑха илет.

Ҫартишӗнчи халӑх «уях!» кӑшкӑрса алӑ ҫупать. Шураҫ туй ачисем, алла-аллӑн ҫавтӑнса, вӗҫе-вӗҫӗн пухӑнса, картиш тулли ташлаҫҫӗ. Кил хушшинчен пуҫласа урамалла ташласа тухса каяҫҫӗ.

Пӗтӗм Штанаш хушши ҫӗмӗрлет. Улатса «уях» кӑшкӑраҫҫӗ:

У-у-у-я, у-у-у-уя,
У-у-у-уя, у-у-у-уя.

Уях, уях, уях,
Уй-я-ай-яй-яй!

Шарт-шарт! шарт! алӑ ҫупаҫҫӗ.

Пирӗн атие ма ятлас?
Ҫур ял таран ҫурчӗ пур,
Ҫӗрпӳ таран ҫӗрӗ пур,
Уй-ах-аяр-аяр-аяй-яй-яй.
Пӗтпӗлтӗк те путене,
Ыраш вырса пӗтерсен,
Ҫӗмел кутне пырать те
Ик ҫунатне шарт ҫапать.

Ҫакӑ ялӑн хӗрӗсем
Ҫачча кайма тапратсан,
Ҫӳпҫе кутне пыраҫ те
Ик аллине шарт ҫапаҫ —
Ҫачча кайма пӑрахаҫ.

Кӑвак куҫлӑ кинеми
Хӗрӗ тӗлне каламасть;

Сар хĕр тĕлне кам пĕлмест?—
Шур пĕркенчĕк айĕнче.

Ати ятне каласан,
Пире такам та хĕр парĕ,
Хамăр ята каласан,
Качака та тухас çук.

Куккук килет авăтса,
Хура вăрмана юратса,
Эпир хамăр çавнашкал —
Хура хĕре юратса.

Чарлан килет чарласа,
Сар ыраша юратса;
Эпир хамăр çавнашкал —
Сар хĕрсене юратса.
Ой-ах-аяр-аяр-ай-ая-аяй.

Вăрманта куккук авăтсан,
Вăрман улпуч хĕпĕртет;
Эпир туйра юрласан,
Сар хĕр амăш хĕпĕртет.

Кăввик-кăввик квакарчăн
Çуначĕпе мухтанать;
Çакă ялăн хĕрĕсем
Шур шупăрпа мухтанаç.

Вăрман витĕр тухрăмăр —
Врене çинчен куç каймарĕ,
Ял-ял витĕр тухрăмăр —
Сар хĕр çинчен куç каймарĕ.

Вăрман витĕр тухрăмăр —
Çĕмĕрт çинчен куç каймарĕ;
Çак ял витĕр тухрăмăр —
Хура хĕр çинчен куç каймарĕ.

Вăрман витĕр тухрăмăр —
Ик айккипе çĕр çырли,
Пĕрне татни пулмарĕ,
Татнă ятне илтрĕмĕр.

Çак ял витĕр тухрăмăр —
Ик айккипе сарă хĕр,
Пĕрне пăхма пулмарĕ,
Пăхнă ятне илтрĕмĕр.

Врене çулçи тăваткал.
Тем чул тваткал пулин те,
Тутăр туса çыхас çук;
Çав ял хĕрĕ çырăскер,
Тем чул çырă пулсан та,
Пирĕн инке пулас çук.
Ой-ях, ая-аяр, ай-я-я-яй.

Мана, те пит уçă юрланăран, те шурă шĕлепке тăхăннăран, сăрине те, эрехне те питĕ ĕçтереççĕ. Ташлассине те эпĕ темиçе тĕслĕ: чăвашла — хыçа силлентерсе, вырăсла — ура пуçне авкаласа, тутарла — пĕççе тăсса, ярăнса — ташла-ташла кăтартрăм та, çавăнпа мана пурте пăхаççĕ.

Тата аслă урампа эпĕ те, туй ачисен умĕнче, Капкасри * лезгинсен ташшине ташласа тухрăм; хам пĕр алла саламат тытнă, тепĕр алла çумри çава çĕççе тытнă; тури урама çитичченех туй ачисем умĕнчен ташласа улăхрăм. «Уях!» кăшкăраççĕ хĕрĕсем; ачасем алă çупаççĕ; ташлама çăмăл. Саламата çӳлелле ывăтса ярап та ярса илеп; çĕççе çӳлелле ывăтап та ташланă майăн алпа тытап каллех.

Манран тĕлĕнеççĕ:

— Айтарах, ай турах, çырлахах! Кам ку? Кам-ши ку?—теççĕ мана палламаннисем.

Ара, пуça пырсан, шăмшак çăмăлланать çав. Штанашра Тимухха хăти çех мар, ялĕпе тенĕ пекех сăра тунă. Кирек кам патне пырсан та, пурте сăра ĕçтереççĕ. Шураç кинĕ пулас хĕр çывăхри яла çӳреме кайнă, тет-мĕн те,— килеймен.

Вăл хушăра Шураç туй ачисем лашасемпе тухрĕç те, ӳсĕрĕлнĕскерсем, Штанаш урамĕнче лашисене сиктерсе, чуптарса çӳреççĕ. Хăшне-хăшне штанашсем ĕçме илсе кĕреççĕ.

---

* Кавказри.

самана — пирте. Тӗнче пурнӑҫӗн хӑлӑпне тытатпӑр ӗнтӗ эпир хамӑр,— терӗм.

Наҫтаҫ, ман ҫине пӑхса:

— Шерхулла пичче! Эпӗ санпа таҫта та кайӑттӑм, анчах ӑҫта тата мӗнле пурӑнӑпӑр? Ҫӗтӳ хыҫҫӑн ҫӳренипе пурнӑҫ пулӗ-ши? — тет. Унтан вӑл: — Ҫалаҫса тӑнине ҫынсем курӗҫ, каллех Митюка каласа кӑтартӗҫ тата,—терӗ те васкаса утрӗ хӑйсен килнелле.

Шухӑшларӑм вара эпӗ Наҫтаҫ ҫинчен. Шалккӑ пек туйӑнчӗ вӑл мана. Мӗн тӑвас — пуянсен енне туртӑнать-ҫке вӑл. Манпа пӗр ҫул мар ҫав унӑн.

Хамӑн та ӑс ҫитеймен тата. Пуянсен туйне ҫыхланмалла марччӗ-мӗн ман. Ҫапла ӗнтӗ хамах намӑс пулчӗ; пуянсем йышӑнмарӗҫ мана, чухӑнсенчен хам тарнӑ пек пулса тӑчӗ.

Юрӗ ӗнтӗ, малашне пӗлӗпӗр.